Ыран – Амăшĕсен кунĕ

Венера Алексеевна Галкина тата Наталия Владимировна Парфирьева – çамрăк амăшĕсем. Иккĕшĕ те районти Пенси фончĕн специалисчĕсем. Иккĕшĕ те ноябрь уйăхĕнче иккĕмĕш ачисене кун çути панă. Çавна май кĕçнерни кун районта Амăшĕсен кунне уявланă чух вĕсем «амăш капиталне» тивĕçни çинчен сертификатсем илчĕç. Хӳтлĕх пайĕнчен çамрăк амăшĕсене пособисем пирки калакан ятарлă справочниксем парнелерĕç, тĕп библиотека та кирлĕ информаципе тивĕçтерчĕ. Пенси фончĕ вара пĕчĕк пепкесен амăшĕсене (иккĕшĕн те хĕр ача) пысăк пуканесем парса чысларĕ.

Телейлĕ амăшĕсен малашне те пурнăçра савăнăçпа юрату пултăр. Ачисене сывă та тĕрĕс-тĕкел ӳстерме вăй-халĕсем çитсе пыччăр.

Н. НИКОЛАЕВА
сăн ӳкерчĕкĕ.

Чи çывăх çын

Мĕн тери çепĕç, çывăх та таса сăмах вăл «анне». Кашни çын – чăваш-и, вырăс-и, тутар-и – хăйĕн пурнăçне çак сăмахпа пуçлать. Тĕнчери пур чĕлхере те «анне» сăмах кĕвĕ пек янăрать те. Шартлама сивĕ çурçĕрте те, тӳсейми шăрăх кăнтăрта та, вĕçĕ хĕррисĕр пуш хирте те – пур çĕрте те кашни ача хăйĕн амăшĕ патне туртăнать, ун пирки манса каймасть, ялан шутлать. Анне пире илемлĕ çут тĕнче курма пурнăç парать, çунат хушса вăй илме кăкăр сĕчĕпе тăрантарать, пирĕн умри йывăрлăха хăй çине илет.

Манăн анне - маншăн чи çывăх, хаклă, юратнă çын. Вăл яланах, эпĕ çут тĕнчене килнĕ кунран пуçласа хальччен те, манпа юнашар. Эпĕ каласа пĕлмен-ха – анне мана сăмахсăрах ăнланнă, мĕн ыйтнине тӳрех тавçăрса илнĕ. Эпĕ утма пултарайман чухне вăл мана аллисем çинче йăтса çӳренĕ, хăй ытамĕнчен пĕр самантлăха та вĕçертмен, эпĕ йывăр чирлесен е мĕнле те пулин инкеке лексен, манăн аннеçĕм ларатăра пĕлмен. Хăш-пĕр чухне вăл ним сăлтавсăрах пăшăрханни те пулнă. Мĕн тейĕн, анне чĕри! Çав тери ырă та туйăмлă-çке вăл! Анне чĕринче нихăçан та юрату сӳнмĕ, вăл никам патне те тимсĕр пулмĕ.

Манăн анне ырă чунлă, кăмăллă çын. Юратнă аннеçĕм яланах мана итлеме, манпа каласма вăхăт тупать, йывăр чух тĕрĕс сĕнӳ парать. Аннен тепĕр ырă енĕ – вăл каçарма, ăнланма пĕлни. Манăн анне питĕ тирпейлĕ, тăрăшуллă та ĕçчен. Вăл мана хăйĕн пек ĕçе юратма вĕрентет.

Анне пĕçернĕ кукăль – чи тутли, анне çыхнă алсиш – чи ăшши, анне панă парне – чи хакли. Эпĕ аннене çав тери юрататăп. Унăн хуйхине, ыратăвне чун-чĕрепе туйса тăратăп, çавăнпа яланах савăнăç парнелеме тăрăшатăп. Эпĕ шкулта аван вĕренсен, ырă ĕçсем пурнăçласан, анне питĕ савăнать.

Аннеçĕм! Эпир сан умăнта вĕçĕмсĕр парăмра. Эсĕ пире пурнăç патăн, пиччепе ман умри йывăрлăхсене те хăвăн çине илетĕн. Хаклă аннеçĕм, кăмăлу сан ылтăн. Эсĕ пире тӳрĕ кăмăллă, тĕрĕслĕхе юратакан çынсем пулма ӳстеретĕн. Пирĕн хушăмăрти юратупа килĕшӳ нихăçан та ан пĕттĕрччĕ, малаллах аталанса пытăрччĕ.

Тавах сана эсĕ пурришĕн. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

Оля ПАВЛОВА,
Чуманкасси шкулĕнчи
11 «а» класра вĕренекен.

Вĕсем – ултă ача амăшĕсем

Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир, хисеплĕ вулаканăмсем, ĕçрен ютшăнмасăр, ял çыннисенчен сивĕнмесĕр ĕç ĕмĕрне ирттернĕ паттăрсене куратăр. Ултшар ача çуратса пурнăç çулĕ çине кăларни, тĕрĕс воспитани парса вĕсене çĕр-шыва юрăхлă туни паттăрлăх мар-и-ха вара!

76 çулхи асаннесене районти шалти ĕçсен пайĕнче тĕл пултăм. Ансăртран та мар, вĕсем кунта ялан кĕтнĕ хăнасем. Агреппина Никитична Сазонова (сулахайри) – учительница. Унăн ывăлĕ – Владимир Леонидович – шалти ĕçсен пайĕн пĕрремĕш штаб пуçлăхĕ пулнă. Пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнăскер, хушнă ĕçре яланах дисциплинăна малти вырăнта тытнă, ыттисемшĕн тĕслĕх пулнă.

– Мăшăрăмпа 6 ача çуратса ӳстертĕмĕр те 5-шĕ аслă пĕлӳ илчĕç, Пĕри, Володя, яланах йĕркешĕн тăрăшатчĕ. Çавăнпах пулĕ вăл ĕçне те милиципе çыхăнтарчĕ, – паянхи çамрăк милиционерсем çине пăхса каласать А. Сазонова.

Тепĕр амăшĕ те шалти ĕçсен пайĕшĕн ют çын мар. 54 çул каялла Шомикри уйхир бригадирне Дмитрий Гаврилович Макарова качча килнĕ Любовь Николаевна 6 ача çуратса ӳстернипе пĕрлех ялти магазинран ĕç пăрахса тухман. Ачисене мĕн пĕчĕкрен ĕçе юратма хăнăхтарса ӳстернĕскер, вĕсене вĕренме те чарман: 6-шĕ те аслă пĕлӳ илнĕ. Вĕсенчен пĕри – Евгений Дмитриевич – паян районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ.

– Ачасем – пурнăç илемĕ, тесе çуратнă эпир вĕсене. Вĕсем пирĕн тимлĕхпе тăрăшулăха ăша илнишĕн эпир паян савăнатпăр кăна. Çакă вăл амăшĕшĕн пысăк парне, – терĕ кĕске каласу вăхăтĕнче Л. Макарова хăйсем Сазоновсемпе хăйматлăхлă пулнине хушса.

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Тискерлĕхе юратупа путарасчĕ

Аннене юратни – питĕ вăйлă туйăм. Унран хаклăрах, ырăрах, пурнăç тăршшĕпе пыракан туйăм мĕнле çыннăн пурши? Ытти темĕнле йывăр туйăмсене те вăхăт сиплет, вĕсем иртсе каяççĕ. Амăшĕн чĕри вара нихăçан та хăйĕн ачисем çинчен манмасть.

Ачисен пурнăçĕнчи пур саманта та амăшĕн чĕри хăйĕн витĕр кăларать – савăнăç-и вăл е инкек. Аннесен куççулĕ те сăваплă, мĕншĕн тесен вĕсем ачисен пурнăçĕпе пурăнаççĕ.

Аннесен нимĕнпе танлашайми юратăвне, вĕсен куççульне пурте хаклама пĕлетпĕр-ши? Нумай чух хĕрарăм вăйсăрлăхĕ тесе ирттерсе яратпăр эпир вĕсене. Çапла пулсан та юратчĕ-ха. Аннесене ăнланмасăр, вĕсем çине хăйсене алăра тытайми пуличченех тарăхакансем те пур вĕт-ха.

Акă пирĕн районти П. гражданинах илер. Ноябрĕн 10-мĕшĕнче Муркаш районĕн 2 № суд участокĕнче унăн ĕçне тишкертĕмĕр. П. ниçта та ĕçлемест, эрех-сăрапа ашкăнса пурăнать. Анчах та хăйĕн амăшĕ çине хирĕçӳ тухнă вăхăтра алă çĕклеме хăйнă. Хăйне пурнăç панă çынна малтан чышса, урисемпе тапса пĕтернĕ. Кайран кил картинче амăшне пуçĕнчен кирпĕчĕпе çапнă. Çапла пулнă кăкăр ĕмĕртсе пурнăç çулĕ çине тăратнă ывăлĕн тавĕ ватă амăшĕ валли.

Çак киревсĕрлĕхе тунăшăн П.-на 5 уйăх та 15 кун хушши ĕçлеттерсе, паттшалăх тупăшĕ валли шалăвăн 20 % тытса юлмалла тунă. Вăрах вăхăт хушши ниçта та ĕçлеменскер, çак наказание пурнăçлĕ-ши? Пурнăçламасан, саккунпа наказание ирĕкрен хăтарассипе ылмаштармалла. П. гражданин айăпа ăнланса илсе тӳрленессе шанас килет.

Ăçтан çемьесенче çакăн пек тискерлĕх, хаярлăх, хĕрхенӳсĕрлĕх çуралать? Сăлтавĕ мĕнре? Çакăн евĕр тискерлĕх пирĕн ума ыран килсе çитместши? Шанчăклă хурав çук.

Упрасчĕ аннесене. Хĕрхенесчĕ. Хаярлăха юрату путартăрччĕ.

Е. НИКИТИНА,
Муркаш районĕн 2 № суд участокĕн мировой судийи.

Официально

Чувашская Республика
Моргаушское районное Собрание депутатов
РЕШЕНИЕ
27.11.2008г. № С-29/4
село Моргауши

О внесении изменений и дополнений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 27.10.07г. № С-21/6 «Об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Моргаушском районе, отнесенных законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»

Моргаушское районное Собрание депутатов решило:

Статья 1. Внести в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 27.10.07г. №С-21/6 «Об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Моргаушском районе, отнесенных законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления» следующие изменения и дополнения:

в статье 29:

а) пункт 4 изложить в следующей редакции:

« 4) оказания услуг по предоставлению во временное владение (в пользование) мест для стоянки автотранспортных средств, а также по хранению автотранспортных средств на платных стоянках (за исключением штрафных автостоянок);»;

б) в пункте 7 слова «киоски, палатки, лотки и другие» исключить;

в) пункты 10 и 11 изложить в следующей редакции:

«10) распространения наружной рекламы с использованием рекламных конструкций;

11) размещения рекламы на транспортных средствах;»;

г) в пункте 13 слова «(прилавков, палаток, ларьков, контейнеров, боксов и других объектов)» исключить;

д) пункт 14 изложить в следующей редакции:

«14) оказания услуг по передаче во временное владение и (или) в пользование земельных участков для размещения объектов стационарной и нестационарной торговой сети, а также объектов организации общественного питания.».

Статья 2. Абзац второй статьи 21 после слов «бюджета Моргаушского района» дополнить словами «, органы местного самоуправления»;

Статья 3. Глава 7 «Земельный налог» и глава 8 «Налог на имущество физических лиц» части второй утрачивают силу с 1 января 2009 года.

Статья 4. Приложения №8 и №9 изложить в редакции согласно приложениям №1 и №2 соответственно к настоящему решению.

Статья 5. Установить, что настоящее решение вступает в силу с 1 января 2009 года, но не ранее, чем по истечении одного месяца со дня его официального опубликования, кроме положений статьи 2, распространяющиеся на правоотношения, возникшие с 1 января 2008 года.

Глава Моргаушского района Ю.А. ИВАНОВ.

Приложение №1
к решению Моргаушского районного Собрания депутатов от 27.11.08 г. № С-29/4 «О внесении изменений и дополнений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 25.10.07г. №С-21/6 «Об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Моргаушском районе, отнесенных законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»

Приложение № 8
к решению Моргаушского районного Собрания депутатов «О вопросах налогового регулирования в Моргаушском районе, отнесенных законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления» от 25 октября 2007 г. № С-21/6

Таблица корректирующих коэффициентов базовой доходности оказания услуг по передаче во временное владение и (или) пользование стационарных мест, расположенных на рынках и в других местах торговли, не имеющих торговых залов обслуживание посетителей

Виды услуг	Корректирующий коэффициент базовой доходности услуг (К2)	
	с. Моргауши	В сельских населенных пунктах
Оказание услуг по передаче во временное владение и (или) в пользование торговых мест, расположенных в объектах стационарной торговой сети, не имеющих торговых залов, объектов нестационарной торговой сети (прилавков, палаток, ларьков, контейнеров, боксов и других объектов), а также объектов организации общественного питания, не имеющих залов обслуживания посетителей, в которых площадь одного торгового места, объекта нестационарной торговой сети или объекта организации общественного питания не превышает 5 квадратных метров	0,21	0,12
Оказание услуг по передаче во временное владение и (или) в пользование торговых мест, расположенных в объектах стационарной торговой сети, не имеющих торговых залов, объектов нестационарной торговой сети (прилавков, палаток, ларьков, контейнеров, боксов и других объектов), а также объектов организации общественного питания, не имеющих залов обслуживания посетителей, в которых площадь одного торгового места, объекта нестационарной торговой сети или объекта организации общественного питания превышает 5 квадратных метров	0,32	0,12

Приложение №2
к решению Моргаушского районного Собрания депутатов от 27.11.08 г. № С-29/4 «О внесении изменений и дополнений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 25.10.07г. №С-21/6 «Об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Моргаушском районе, отнесенных законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»

Приложение № 9
к решению Моргаушского районного Собрания депутатов «О вопросах налогового регулирования в Моргаушском районе, отнесенных законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления» от 25 октября 2007 г. № С-21/6

Таблица корректирующих коэффициентов базовой доходности оказания услуг по передаче во временное владение и (или) в пользование земельных участков площадью, для организации торговых мест в стационарной торговой сети, а также для размещения объектов нестационарной торговой сети (прилавков, палаток, ларьков, контейнеров, боксов и других объектов) и объектов организации общественного питания, не имеющих залов обслуживания посетителей

	корректирующих коэффициентов базовой доходности услуг (К2)	
	с. Моргауши	В сельских населенных пунктах
Оказание услуг по передаче во временное владение и (или) в пользование земельных участков площадью, не превышающей 10 квадратных метров, для организации торговых мест в стационарной торговой сети, а также для размещения объектов нестационарной торговой сети (прилавков, палаток, ларьков, контейнеров, боксов и других объектов) и объектов организации общественного питания, не имеющих залов обслуживания посетителей	0,1	0,1
Оказание услуг по передаче во временное владение и (или) в пользование земельных участков площадью, превышающей 10 квадратных метров, для организации торговых мест в стационарной торговой сети, а также для размещения объектов нестационарной торговой сети (прилавков, палаток, ларьков, контейнеров, боксов и других объектов) и объектов организации общественного питания, не имеющих залов обслуживания посетителей	0,1	0,1